**Аэлита**

Эсĕ пур, Аэлита,
Анчах инçетре-инçетре.
Эсĕ пур, Аэлита,
Манра, ман çемçе ĕмĕтре.

Манăн кăкăр шал енĕ
Вăл — санăн сенкер планету.
Çăлтăрпи — Аэлита,
Куçа курăнман юрату.

Эсĕ пур, Аэлита,
Таçта инçетре-инçетре.
Эсĕ кур, Аэлита, —
Ман Çĕрĕм кăвак та хитре.

Хитререх те тăвасшăн
Эпир çакă çĕр чăмăрне:
Ĕçпеле çывхаратпăр
Куллен Сарă кун ĕмĕрне.

Ĕненсем, Аэлита:
Кĕç сирĕлĕ сивĕ тĕтре.
Туйăм радиохумĕ
Мана ун çинчен систерет.

Çăлтăрпи — Аэлита,
Ик çăлтăр тĕл пулнă чухне
Кĕт мана: эп парнелĕп

Сана тăван ен чечекне.

*Дмитриев, А. Аэлита : [сăвă] / А. Дмитриев // Тăван Атăл.* - 2010. – № 3. – С. 89.